**Сивĕре**

Шартлама сивĕрен
Виç хĕвел тӳпере,
Кĕрĕкĕ çӳхерен
Шур путек те пӳртре.
Çӳретмеççĕ шкула:
Пит-куçа тăм илет.
Вылямашкăн тула
Ман тухассăм килет.
Хураçка йăвинчен
Шурă пас кăларать.
Эпĕ çитермесен
Кам ăна мĕн парать?
— Хĕллехи кун кăра,
Терĕ лапкăн анне,
Пушă тăк кункăра
Антармасть сĕт ĕне.
Выльăха та паян
Ăшă шыв ĕçтерер,
Сиккелет кăсăя,
Вир кĕрпи çитерер.

*Борлен,Б. Сивĕре : [сăвă] / Б. Борлен // Чăваш литературин антологийĕ. — Шупашкар, 2015. — [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. — С. 267.*